Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

65 (7596) № * Шӑмат кун, 2008 ҫулхи августӑн (ҫурла) 30-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Учительсен август уйӑхӗнчи районти конференцийӗнчен

## Паянхи вӗрентӳ ӗҫӗн актуаллӑ ыйтӑвӗсем

Хаҫатӑн иртнӗ номерӗнче пӗлтернӗччӗ, августӑн 26-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче учительсен районти конференцийӗ иртрӗ. Конференци теми – «Паянхи вӗрентӳ ӗҫӗн актуаллӑ ыйтӑвӗсем».

Малтанах учительсем «Сывлӑх» физкультурӑпа спорт комплексӗнчи фойере хатӗрленӗ чечек ҫыххисен куравӗпе тата ҫӗнӗ ҫуртӑн залӗсемпе тӗплӗн паллашрӗҫ. Кунтах вырнаҫнӑ искусство шкулӗн вӗрентекенӗсемпе те чылай каласмалли тупӑнчӗ вӗсен. Кӑҫал унта вӗренме кӗрес текенсем валли сентябрӗн 1-3-мӗшӗсенче хатӗрленӳ курсӗсем ӗҫлӗҫ. Тепӗр икӗ кун – сентябрӗн 4-5-мӗшӗсенче – экзаменсем. Пур шкулти учительсем те хӑйсен вӗренекенӗсем тӗрлӗ енлӗ аталанса пырассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпах кунти хореографи, музыка, эстетика, художество уйрӑмӗсене тата хор класне килес шутлӑ ачасене ҫак кунсенчех искусство шкулӗпе тӗплӗнрех паллаштарма шантарчӗҫ.

Районти историпе краеведени музейӗнче йӗркеленӗ «Муркаш районӗ: вӑхӑтсен чӗрӗ ҫыхӑнӑвӗ» экспозици те, тури чӑвашсен тумне сӑнласа паракан зал та йышӑнчӗҫ ҫак кун вӗрентекенсене.

Конференцин пленарлӑ пайӗнче малтан район пуҫлӑхӗн доклачӗ пулчӗ. Юрий Александрович Иванов районти шкулсен задачисемпе малашлӑхӗ ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Хӑйӗн докладӗнче вӑл ачасен ҫуллахи канӑвӗпе ӗҫ вӑхӑтне йӗркелес ыйту патне яваплӑрах пыма сӗнчӗ. 1 сменӑпа кӑна лагерьсем йӗркеленине питӗ ҫителӗксӗр тесе хакларӗ. Пур вӗренекен те ҫуллахи вӑхӑтра шкулти лагере ҫӳресси, паллах, малашлӑхра-ха. Анчах район пуҫлӑхӗ ку ӗҫе халех йӗркелемелли пирки каларӗ. Тӗслӗх вырӑнне кӑҫал виҫӗ сменӑпа ӗҫленӗ Чуманкасси шкулӗнчи лагере илсе кӑтартрӗ. Хӑш-пӗр шкулсенче вара ку ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнине те асӑнчӗ.

Класс ертӳҫисене ӗҫленӗшӗн укҫа хушса пани тата творчествӑлла ӗҫлекенсене хавхалантармалли пай укҫине пама тытӑнни тӳрремӗнех ҫул ҫитменнисен преступлени тӑвасси чакса пынипе ҫыхӑнни курӑнать. Ку темӑна районти шалти ӗҫсен пайӗн ҫул ҫитмен ҫамрӑксемпе ӗҫлекен подразделени ертӳҫи В.М. Максимов хӑй сӑмахӗнче анлӑрах сарчӗ. Шкулсемпе тачӑ ҫыхӑнса профилактика ӗҫне вӑйлатассипе тимлемеллине, вӗрентӳ учрежденийӗсене кӗрсе ҫӳрес йӗркене ҫирӗплетмеллине, вӗсенче ятарлӑ хурал кирлине каларӗ.

Шкулсене пурлӑх енӗпе пуянлатас ыйту та паян ҫивӗччисенчен пӗри. Ачасен вӗренӳ пахалӑхӗ унтан нумай килет. Ылтӑн тата кӗмӗл медальсемпе вӗренсе тухакансен хисепӗ ӳсни те ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ. Ку савӑнтарать, ҫапах та паян вӗрентӳ учрежденийӗсем, пурлӑх енчен илес пулсан, пурте кирлӗ пек шайра марха. Ку тӗлӗшпе туса ҫитермелли нумай.

Шел пулин те, шкулсенче ачасен йышӗ те чакса пырать. Ку вара шкулсене реконструктуризацилеме хистет. Ҫак пулӑма паянах хатӗр пулмаллине, палӑртнӑ ыйтупа активлӑ ӗҫлемеллине палӑртрӗ Юрий Александрович. Хӑйӗн докладӗнче вӑл ача сачӗсен проблеми ҫинче те чарӑнса тӑчӗ. Мӑн Сӗнтӗрти тата Муркашри садиксенче ачасене валли вырӑнсем ҫитмеҫҫӗ. Ҫав хушӑрах теприсем туллин ӗҫлемеҫҫӗ, тӑкакӗ вара ҫук мар. Ҫак проблемӑпа та ҫитес вӑхӑтрах ҫине тӑрса ӗҫлемелле. Ачасем садике ҫӳрессин процентне ӳстермеллех. Ҫак проблема «Мечта» ача сачӗн ертӳҫин сӑмахӗсенче те уҫҫӑнах палӑрчӗ. Г.А. Шолкова инҫерех вырнаҫнӑ ялсенчи ачасене автобуспа турттарассине йӗркелес ыйтӑва та ҫӗклерӗ, унсӑр пур ача та садик алӑкне уҫаймӗ тесе палӑртрӗ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).



**Сӑн ӳкерчӗкре: ача сачӗсен ертӳҫисем Э.Л. Магаева («Лебедушка»), М.А. Воробьева («Золушка») тата М.В. Иванова («Малыш») ҫӗнӗ вӑйсемпе пуҫлаҫҫӗ вӗренӳ ҫулне.**

Сентябрӗн 1-мӗшӗ – Пӗлӳ кунӗ

**ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**
**Пӗлӳ кунӗ ячӗпе сире чӗререн саламлатӑп!**

Ҫак чаплӑ уявӑн хӑйне май туртӑмлӑх пур, вӑл никама та лӑпкӑ хӑварма пултараймасть. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫӑнни хаваслӑ тӗл пулусемпе, ҫутӑ аса илӳсемпе, ырӑ шанчӑкпа, пултарулӑх кӑмӑл-туйӑмӗпе ҫыхӑннӑ. Кунпа пӗрлех вӑл шкул ачисемпе студентсен пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр, педагогсен ӳсӗмӗн тата профессионализмӗн татах тепӗр витӗмлӗ экзаменӗ пулса тӑрать.

Хальхи условисенче пахалӑхлӑ тата уҫӑ вӗрентӳ ҫӗр-шыв тата регионсен динамикӑлла аталанӑвӗн тӗп ресурсӗ пулса тӑрать. Отрасле модернизацилесси – Чӑваш Енре ирттерекен патшалӑх политикин тӗп енӗсенчен пӗри. Эпир пурнӑҫа кӗртсе пыракан анлӑ вӗрентӳ проекчӗсем хӑйсен эффективлӑхне кӑтартса пачӗҫ. Хальхи чи ҫӗнӗ вӗрентӳ оборудованийӗпе тивӗҫтернӗ шкулсем, Интернета тухма май паракан компьютер класӗсем, шкул автобусӗсем республикӑн паянхи пурнӑҫӗн уйрӑлми пайӗ пулса тӑчӗҫ.

Анлӑн сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн Чӑваш Республикинче вӗрентӳ ӗҫне 2040 ҫулччenхи тапхӑрта аталантармалли стратегие йышӑнни кӑҫалхи пысӑк пӗлтерӗшлӗ событисенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫак питӗ анлӑ документ тӑтӑш вӗрентӗвӗн пачах ҫӗнӗ системине туса хурассипе ҫыхӑннӑ. Ҫапла вара пӗлӳ ҫинче никӗсленсе тӑракан ҫителӗклӗ пурнӑҫ условийӗсемлӗ общество енне татах тепӗр утӑм тунӑ.

Шанса тӑратӑп, ырми-канми ӗҫленипе тата тӑван ҫӗре юратнипе эпир пӗрле татах пысӑкрах чикӗсене ҫӗнсе илме пултаратпӑр. Сире, хаклӑ ентешӗмӗрсем, ҫирӗп сывлӑх, ӗҫӗрте ӑнӑҫу, телей тата пурне те чи ыррине кӑна сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчӗ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

---

**Хисеплӗ учительсем, шкул ҫулне ҫитмен ача-пӑча учрежденийӗсенче вӑй хуракансем, педагогика ӗҫӗн ветеранӗсем!**
**Студентсемпе шкул ачисем тата ашшӗ-амӑшӗсем!**

Сире Пӗлӳ кунӗ тата ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатӑп.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ - ҫӗнӗ шухӑшсем, ҫӗнӗ ӗмӗтсемпе задачӑсем. Вӗсене пурнӑҫласси педагогсен ӑсталӑхӗнчен, ачасен тӑрӑшулӑхӗнчен нумай килет.

Шкул – пӗлӳ тата ырӑ пуҫарусен тӗнчи. Ҫак тӗнчере ачасем пурнӑҫ ҫулӗн пӗрремӗш утӑмӗсене тӑваҫҫӗ. Паянхи кун анлӑ тавракурӑмлӑ, тарӑн пӗлӳллӗ, ӑста, ҫӗнӗ тата малта пыракан технологисене алла илме пултаракан специалистсем пур ҫӗрте те кирлӗ. Ҫавӑнпа та учитель ӗҫӗ пирӗн пурнӑҫра яланах пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче парта хушшине пурӗ 4266 шкул ачи ларӗ, 314 ача пуҫласа шкул алӑкне уҫӗ. Паян верентӳ учрежденийӗсенче тарӑн пӗлӳ илме, тавракурӑма анлӑлатма пур условисем те ҫителӗклӗ: классем ҫӗнӗ оборудованисемпе, компьютерсемпе пуянланса тӑраҫҫӗ, шкул автобусӗсем ҫӳреҫҫӗ, педагогсем хӑйсен ӗҫӗнче ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ методикӑсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Ҫитӗненкен ӑрӑва вӗрентсе воспитани парас ӗҫре учительсемпе воспитательсене ӑнӑҫу, ҫитӗнӳсем, ҫирӗп сывлӑх тата телей сунатӑп.

Пултарулӑхӑр вӗҫӗ-хӗррисӗр пултӑр, ӗҫлес кӑмӑл ӳссех пытӑр!

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

---

Пӗлӳ кунӗ тата ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа педагогсене, шкул ачисене тата студентсене, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсене ҫавӑн пекех Пӗтӗм Раҫҫейри «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» («Единая Россия») политика партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗ, Раҫҫей Федерацийӗн Патшалӑх Думин депутачӗсем Раҫҫей Геройӗ Н.М. Бударин летчик-космонавт, П.В. Семенов саламлаҫҫӗ, ырлӑх-сывлӑх, творчество ӗҫӗнче ӑнӑҫу, телей сунаҫҫӗ.

Налук инспекцийӗнче

## Парӑм ҫынна чыс тумасть

Кӑҫалхи 8 уйӑх хушшинче налук органӗн, суд приставӗсен службин тата патшалӑх ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн представителӗсем 71 пӗрлехи рейд ирттернӗ. Уйрӑм ҫынсем пурӑнакан, массӑллӑ суту-илӳ тӑвакан вырӑнсенче вӗсен Хӗрлӗ Чутай, Муркаш, Етӗрне районӗсенче пулма тивнӗ.

Пӗрлехи рейдсем ирттерсе парӑмҫӑсенчен 942,8 пин тенкӗ шыраса илнӗ. Вӑл шутран уйрӑм ҫынсенчен 283,1 пин тенкӗ. Кунпа пӗрлех 1095,8 пин тенкӗлӗх пурлӑх ҫине арест хунӑ, вӑл шутран уйрӑм ҫынсен пурлӑхӗ ҫине 31 пин тенкӗлӗх. Рейдсем вӑхӑтӗнче парӑм енӗпе кӑтартусене налук тӳлесе тӑракан 2558 уйрӑм ҫыннӑнне тӗрӗслеме тивнӗ.

Ирттернӗ асӑннӑ мероприятисем вӗсем чӑннипех те кирлӗ пулнине кӑтартса параҫҫӗ. Муркаш районӗнче пӗрлехи рейд ирттернӗ чухне транспорт налукне тӳлемесен автомашинӑна арестлеме тивесси пирки аса илтерсенех В.Г. Васильев парӑма парса татрӗ тата хальхи вӑхӑтри тӳлевсене 45 пин тенкӗ тӳлерӗ. 2008 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗ тӗлне вара унӑн транспорт налукӗ енӗпе парӑм 10,5 пин тенкӗ пулнӑ.

Г.Г. Белугинӑн транспорт налукӗ енӗпе парӑм 16,4 пин тенкӗ. 2008 ҫулхи июнь уйӑхӗнче Муркаш районӗнчи суд приставӗсен службине налук тӳлесе тӑракан асӑннӑ ҫын тӗлӗшпе 15 пин тенкӗлӗх суд приказӗ ярса панӑ. Г.Г. Белугинӑн парӑма парса татма, приставсене патшалӑх пошлини 100 тенкӗ тата ӗҫ тунин сборне суд приказӗн 7 процент чухлӗ – пӗтӗмпе 16,2 пин тенкӗ тӳлеме тивет.

Анаткас Апашри Д.А. Арсентьева, Чурикасси ялӗнчи Ю.В. Данилова, Кӗртекасси ялӗнчи С.А. Иванова, Вӑрманкас Хачӑкри М.И. Романова, Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗнчи Вӑрманкасси ялӗнчи А.А. Петрова, Патаккасси ялӗнчи Ю.И. Григорьевана, Москакасси ялӗнчи В.П. Столярова ҫавна аса илтересшӗн. Сирӗн транспорт налукӗ енӗпе парӑмсем 10-шар пин тенкӗ ытла. Парӑмсене ҫывӑх вӑхӑтрах парса татас пулать. Кайран «чавса ҫывӑх та, ҫыртма ҫук» текен каларӑша аса илмелле ан пултӑр.

**Л. СЕМЕНОВА,**
**Федераллӑ налук службин Чӑваш Республики тӑрӑх районсем хушшинчи 6-мӗш номерлӗ инспекцийӗн парӑмсене анализ тӑвас тата йӗркелес енӗпе ӗҫлекен пайӗн 1-мӗш категори специалисчӗ.**

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗн парни

## Ырӑ сӑмаха тивӗҫлӗ

Ҫыншӑн ырӑ ӗҫ тума пултарни – питӗ аслӑ пахалӑх тесе ахальтен каламаҫҫӗ ӗнтӗ ваттисем. Ырӑ ӗҫсем тумах ҫуралнӑ пуль Атапай ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Павел Николаевич Вязов.

Вӑл тӑрӑшнипе Атапайри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулти мӗн пур вӗренекен ҫывхарса килекен вӗренӳ ҫулне ҫӗнӗ кӗнекесемпе кӗтсе илет. Ҫакӑ вӑл пирӗн шкулта вӗренекен ачасемшӗн калама ҫук пысӑк савӑнӑҫ. Кашни ҫулах Павел Николаевич пирӗн шкула мӗнпе те пулин пулӑшать.

Атапай шкулӗн вӗрентекенӗсем, шкулта вӗренекенсем тата вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем ҫакӑн пек пысӑк парнешӗн ӑна хаҫат урлӑ питӗ пысӑк тав сӑмахӗ калаҫҫӗ. Сӑвап сӑваппах таврӑнтӑрччӗ ун патне!

**Л. МАКСИМОВА.**

Юбилей

## Саламлатпӑр

Пирӗн хаклӑ ҫыннӑмӑра, хӗрӗх ҫул ытла ӗҫлесе пуян опыт пухнӑ ӑста механизатора, Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Геннадий Георгиевич ВОЛКОВА** юбилей ячӗпе саламлатпӑр.



Тав тӑватпӑр сана ырӑ кӑмӑлушӑн, ачусене ӗҫе, пурнӑҫ ҫулӗпе тӗрӗс утма вӗрентнӗшӗн. Сывлӑху сан юман пек ҫирӗп пултӑр. Эпир вара саншӑн, хамӑрӑн чи ҫывӑх ҫыншӑн, яланах савӑнатпӑр, сана юрататпӑр, ҫӗр ҫинчи мӗн пур ырлӑха сунатпӑр.

Эсӗ пирӗншӗн нумай ырӑ ӗҫ тунине асра тытса тав туса ҫак уяв кунӗнче ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр.

Ҫулсем иртеҫҫӗ сисӗнми
Кирлех-ши уншӑн кулянма?
Вӑй-хал пултӑр иксӗлми,
100 ҫул сунатпӑр пурӑнма.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, мӑнукӗ, хӗрӗ, кинӗ, ывӑлӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем, хӑти-тӑхлачи, кӳршисем, юлташӗсем.**

---

Райадминистрацире

## Ӗҫри хастарлӑхшӑн

**Район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗ тата халӑх вӗрентӗвӗн ӗҫченӗсен профсоюзӗн районти организацийӗн канашӗ ыйтнисене тивӗҫтерсе, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн кӑҫалхи августӑн 26-мӗшӗнчи 479 № йышӑнӑвӗпе ҫитӗнекен ӑрӑва вӗрентсе воспитани парас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн тата нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:**

– **Альбина Аверкиевна ГАРАШКИНАНА**, Шомик шкулӗн химипе биологи учительне;

– **Юрий Юрьевич ИВАНОВА**, Москакасси шкулӗн технологи учительне;

– **Светлана Ильинична КАРПОВАНА**, Муркаш шкулӗн физика учительне;

– **Валентина Алексеевна ОРЛОВАНА**, Анаткассинчи пуҫламӑш шкул-ача сачӗн пуҫламӑш классен учительне;

– **Галина Леонидовна ПЕГАСОВАНА**, Вӑрманкассинчи пуҫламӑш шкул-ача сачӗн директорне;

– **Любовь Римовна САВЕЛЬЕВАНА**, Ҫатракасси шкулӗн социаллӑ педагогне.

Ыр кӑмӑллӑх

## Инкек тӳснисене пулӑшма

Грузипе Кӑнтӑр Осети хирӗҫ тӑрӑвне пула Кӑнтӑр Осетире пурӑнакан мирлӗ ҫынсем сахал мар инкек тӳсеҫҫӗ. Ҫавна май вӗсене пулӑшас тӗллевпе Раҫҫей Перекет банкӗн Ҫурҫӗр Осетири 8632 № уйрӑмӗнче ятарлӑ счет уҫнӑ. Укҫа-тенкӗ куҫарнӑ чухне тӳлев докуменчӗсем хатӗрлемелли счет реквизичӗсем ҫапла:

ИНН 1501003170 КПП 151501001
Министерство труда и социального развития РСО-Алания
Р/с 40410810860340000001
БИК 040702660
К/с 30101810600000000660
В Северо–Кавказском банке СБ РФ г. Севастополь.

---

ЗАО «МСО «Моргаушская» поздравляет с началом учебного года учителей и учеников Моргаушского района и выражает особую благодарность ученикам МОУ «Юнгинская СОШ им. С.М. Михайлова» Анчикову Александру Георгиевичу, Манилову Денису Андрияновичу, Яндимирову Игорю Анатольевичу, Осипову Дмитрию Анатольевичу и ученику МОУ «Нискасинская СОШ» Мостову Дмитрию Валерьевичу за добросовестный труд во время летних каникул.